Муркаш округĕн территори пайĕсен ĕҫĕ-хĕлĕ

# Мăн Сĕнтĕр территори пайĕ

***Мăн Сĕнтĕр, Атикасси, Мăн Хураҫка, Мăн Тутаркас, Туҫи Олкаш, Вомпăкасси, Ишмула, Кармăш, Кăмăркасси, Малтикас, Мишер, Лап Олкаш, Ҫĕн Шоккăн, Токшик, Ойкас, Оркум, Турикасси, Ямолккă, Шупуҫ ялĕсем***

**Муркаш округĕн территорийĕнчи 19 яла пĕрлештерсе тăракан чи пысăк территори пайĕсенчен пĕрне пиллĕкмĕш ҫул ĕнтĕ Наталья МАРЕЕВА ертсе пырать. «Наталья Анатольевна тăрăшнипе юлашки ҫулсенче ял ҫыннисен пурнăҫ условийĕсем самай лайăхланнине пурте курса тăратпăр», – ҫапла каланине кирек хăш ялта та илтме пулать.**



Ăнсăртран мар. Чăннипех те территорире иртнĕ ҫулсенче ҫынсене канăҫ паман чылай ыйтăва анăҫлă татса пама май ҫитернĕ. «Юлашки вăхăтра ял ҫыннисен пурнăҫ хăтлăхне лайăхлатасси ҫине республика шайĕнче пысăк тимлĕх уйăрнине пурте куратпăр. Пулăшăвăн тĕрлĕрен программи, проекчĕсем пурнăҫа кĕреҫҫĕ. Ҫавăнпа та хамăр пуҫарулла пулсан, туса панă майсемпе анлăрах усă курма тăрăшсан, кирек епле ыйтăва та татса пама май ҫитеретпĕрех», – тет ку тĕлĕшпе вырăнти ертӳҫĕ.

Акă Мăн Сĕнтĕрте нумаях пулмасть 3,5 гектар лаптăк йышăнакан Ҫĕнтерӳ 40 ҫул тултарни ячĕллĕ парка савăнăҫлă лару-тăрура уҫнă. «Формирование комфортной городской среды» регион проекчĕпе кунта хăтлăх ĕҫĕсене икĕ тапхăрпа 20 млн ытла тенкĕлĕх туса ирттернĕ. Асăннă программăпах кăҫал паркра ача-пăча вăййă комплексĕ те йĕркелеме май килнĕ. Ҫав тĕллевпе республика 8 млн тенкĕ уйăрнă.

Республика программи пулăшнипех пĕлтĕр кунти вăтам шкул хайĕн сăн-сăпатне тĕпрен улăштарнă. Капиталлă юсав ĕҫĕсем туса ирттернĕ. Кăҫал вара шкул территорийĕнче хăтлăх ĕҫĕсене 22 млн тенкĕлĕх туса ирттерме палăртаҫҫĕ.

Ял ҫыннисен шыв ыйтăвне татса парассипе тĕллевлĕ ĕҫлесе пыраҫҫĕ. Чăваш Республикин «Модернизация и развитие сферы жилищно-коммунального хозяйства» патшалăх программин «Модернизация коммунальной инфраструктуры на территории Чувашской Республики» хушма программине хутшăнса территори пайĕнче 2022 ҫулта харăсах пилĕк объектра юсав ĕҫĕсем туса ирттернĕ, шыв уҫламалли башньăсен ыйтăвне Шупуҫĕнче, Ҫĕн Шоккăнра, Вомпăкассинче, Мăн Сĕнтĕрте тата Кармăшра татса пама май килнĕ. Татах тепĕр объектра – Туҫи Олкашра ку ĕҫсене кăҫал пурнăҫланă.

Республикăра 2017 ҫултан тытăнса пурнăҫа кĕрекен пуҫарулăх бюджечĕн программи Мăн Сĕнтĕр территори пайĕнче анлă ҫул тупнă. Кăҫал пуҫарулăх бюджечĕн мелĕпе кунта 5 проект пурнăҫа кĕртеҫҫĕ. Ялсенче ҫапла майпа урам ҫулĕсене вак чул сарса хытараҫҫĕ, шыв пăрăхĕсене юсаса ҫĕнетеҫҫĕ, ытти хăтлăх ĕҫĕ туса ирттереҫҫĕ. Ҫак вăхăта Мăн Хураҫкари Центральная урамран тытăнса Атикасси ялĕ патне ҫити тата Мăн Сĕнтĕрти Горький урамĕнче шыв пăрăхĕсене ҫĕнетнĕ ĕнтĕ. Кунсăр пуҫне Мăн Сĕнтĕрти Трудовая урамра, Шупуҫĕнчи Огадерская урамра, Мăн Тутаркасри Пакшандаев урамĕнче ҫулсене вак чул сарма палăртаҫҫĕ. Республика ҫул-йĕр фондĕнчен укҫа уйăрнипе вара ҫак кунсенче кăна Мăн Хураҫка урамĕнче асфальт сарса пĕтернĕ.



Мăн Сĕнтĕр паркĕ – ял ҫыннисен юратнă вырăнĕ.



Турикасси ҫулне пуҫарулăх бюджечĕн мелĕпе юсанă.

**Владимир ИЛЬДУКОВ, Турикасси ялĕн старости:**



– Хам ҫак ялтан пулин те, унччен хулара ĕҫлесе пурăннă. Вунă ҫул каялла яла пурăнма куҫсанах мана ял ҫыннисем хăйсен старости пулма шанчĕҫ. Шанăҫа тӳрре кăларас пулать. Пикенсех ĕҫе кӳлĕнтĕм.

Чăвашсем авалах ҫапла калани пур. Енчен те кунне пĕр пăта та ҫапмастăн пулсан, хуҫалăх саланать. Ку сăмахсем шăпах ĕнтĕ ял ҫыннине, ял пурнăҫне пырса тивеҫҫĕ. Ялта пурнăҫĕ ҫавăн пек. Куллен тенĕ пекех мĕн те пулин тумалла. Ҫавăн чухне кăна пирĕн кулленхи пурнăҫ хăтлăланса пырĕ. Шăпах ҫак чăнлăха тĕпе хурса пурăнма тăрăшатпăр та эпир хамăр ялта.

Малтанхи вăхăтра ялта урам хушшисене ҫĕрлехи вăхăтра ҫутатса тăрасси те йĕркеллĕ пулман, йĕпе-сапа чухне ҫулĕ те пылчăкпа ҫăрăнатчĕ, ҫуллахи вăхăтра кăна мар, хĕл кунĕсенче шывсăр аптăрани те пулнă.

Малтанах ялта шыв проблемине татса парас шухăшлă пултăмăр. Туса парасса кĕтсе май килмест. Ҫавăнпа та ыйтăва ял ҫыннисем пуҫарулăх бюджечĕн мелĕпе пурнăҫлама кăмăл турĕҫ. Кирлĕ чухлĕ укҫи-тенкине те пуҫтартăмăр. Ҫапла вара 2020 ҫулта ял хушшинче шыв пăрăхĕсем хурса хăвартăмăр.

Тепĕр ҫулне ялти ҫула вак чул сарса хытарас терĕмĕр. Шухăшланă – тунă. 800 метр тăршшĕ ҫула та пуҫарулăх бюджечĕн мелĕпех юсаса йĕркене кĕртрĕмĕр. Хамăр укҫа пухсах асфальт ванчăкĕ те туянтăмăр, ҫула ҫиеле сарса тикĕслерĕмĕр.

Ҫапла майпа кашни ҫулах эпир мĕнле те пулин пĕлтерĕшлĕ ыйтăва татса пама тăрăшатпăр. Иртнĕ ҫул пĕрлехи вăйпа шыв башнине улăштарма пултартăмăр, насусне те ҫĕннине лартнă. Тинех ялта шыв ыйтăвне пĕтĕмĕшпех татса патăмăр теме пулать.

Халĕ пирĕн ялта ҫулĕ те, шывĕ те, ҫути те пур. Ҫавăнпа та ҫирĕплетсех калама пулать: хамăр пĕрле пулсан, пĕрле тăрăшсан темĕнле ыйтăва та татса пама пулать. Мĕн туни – хамăр валлиех.



Мăн Хураҫкари шыв башнине иртнĕ ҫул хута янă.

**Валентина КОМИССАРОВА, вырăнти активистка, ал ĕҫ ăстисен кружокĕн ертӳҫи:**



– Культурăпа кану центрĕнче икĕ ҫул ĕҫлетĕп. Унччен Кармăшри вăрҫăпа ĕҫ ветеранĕсен интернат ҫуртĕнче вăй хунă.

Ятарлă ҫар операцийĕ пуҫлансанах пирĕн тăрăхра пурăнакансем те мобилизаци йĕркипе хăйсен ирĕкĕпе ҫара кайнисене, контрактниксене пулăшас ĕҫе кӳлĕнчĕҫ. Фронта ăсатма тумтир, ҫипуҫ, апат-ҫимĕҫ, эмелсем пухассине йĕркелерĕмĕр. Кăҫалхи февральтен вара эпир хамăр патра маскировка сеткисем ҫыхма тытăнтăмăр. Ҫак вăхăта ентеш салтаксем валли 53 маскировка сеччĕ хатĕрлесе ăсатма ĕлкĕртĕмĕр.

Пулăшу ĕҫĕ – пĕрлехи ĕҫ. Хамăрăн ентешсем алла хĕҫ-пăшал тытса пирĕн мирлĕ пурнăҫшăн ҫапăҫнă чухне эпир епле лăпкă ларма пултаратпăр-ха? Пирĕн салтаксем пуҫне ҫĕклекен фашизмпа ҫапăҫнă ҫĕрте хăйсем пĕччен пулманнине туйса тăччăр тетпĕр. Сеть ҫыхнă ҫĕрте куллен тăрăшакансем Василиса Яргейкина, Анна Егорова, Галина Захарова, Наталья Цветкова, Татьяна Краснова, Татьяна Блинова, Зинаида Сорокина ҫакна лайăх ăнланаҫҫĕ.

Салтаксем патне ăсатма посылкăсем те хатĕрлетпĕр. Ҫак пархатарлă ĕҫре эпир пĕччен мар. Пулăшу ĕҫне Ойкас, Мăн Хураҫка ялĕсенче пурăнакансем тата ыттисем активлă хутшăнаҫҫĕ. Хамăр тăрăхри уйрăм предпринимательсем Александр Титов, Виталий Васильев, Мăн Сĕнтĕр райповĕ укҫа-тенкĕпе те, материалсемпе те, продуктсемпе те пулăшма тăрăшаҫҫĕ. Валентина Сютесова ҫипуҫ енĕпе сахал мар пулăшрĕ. Пурне те вĕсене тав сăмахĕ калаҫшăн. Пĕрле пулсан эпир ҫĕнтеретпĕрех.




Вырăнти «Янаш» юрăпа ташă халăх ансамблĕ хăйĕн пултарулăхĕпе чикĕ леш енче те паллаштарнă. Сăн ӳкерчĕке 2006 ҫулта Венгрире тунă.

Кăларăма
Владислав ШАПОШНИКОВ
хатĕрленĕ.